- туянмалли хакне кирлĕ чухлĕ йӳнетсе сутма;
- таварăн кăлтăкĕсене тăхтаса тăмасăр тӳлевсĕр юсаса пама;
- туянакан е урăх çын тавар кăлтăкне пĕтерес тесе тăкакланнă хакне саплаштарма.

Ун пек чухне туянакан кирлĕ пек пахалăхлă мар тавар туяннă хыççăн **тăкак тӳснине пĕтĕмпех тӳлесе татма ыйтма** пултарать.

Техника тĕлĕшĕнчен кăткăс е хаклă таварăн пахалăхĕн требованийĕсене пăснă пулсан (юсама май çук кăлтăксем пулсан, чылай хакла е юсама нумай вăхăт кирлĕ кăлтăксем пулсан, е вĕсене юсасан вĕсем каллех тупăнаççĕ пулсан е ытти çавăн евĕр çитменлĕхсем тупăнаççĕ пулсан) Саккунăн 18-мĕш статйипе килĕшӳллĕн çак тавара улăштарса пама ыйтма ирĕк пур.

Техника тĕлĕшĕнчен кăткăс таварсем пирки палăртнă требование Раççей Федерацийĕн Правительстви çирĕплетнĕ çавăн йышши таварсен списокĕпе килĕшӳллĕн пăхса тухаççĕ.

Таварта (апат-çимĕç, парфюмерипе косметика изделийĕсем, куллен усă курмалли хими таварĕсем тата ытти те) **кăлтăкĕсемпе юсама май çук çитменлĕхĕсене тупсан** туянакан хăй суйласа çавăн пекех, анчах лайăх пахалăхлă таварпа улăштарса пама ыйтма е туянмалли хакне пĕчĕклетсе сутма ыйтма пултарать.

Çӳлерех асăннă требованисене ыйтас вырăнне туянакан **тавара туянассине пăрахăçласа таваршăн тӳленĕ укçана тавăрса пама ыйтма пултарать.**

Ун пек чухне сутуçă ыйтнипе тата ун шутĕнчен туянаканăн кирлĕ пек пахалăхлă мар тавара тавăрса памалла.

Туянакана тавар хакне тавăрса панă чухне тавара пĕтĕмпех е кăштах усă курнăшăн, тавар сăнĕ пĕтнишĕн е ытти лару-тăрура **тавар йӳнелнишĕн унăн хакне сутуçăн тытса юлмалла мар.**

Туянакан сутуçа чылай вăхăт усă курмалли таварăн кăлтăкĕсене юсама е çакăн пек таварпа улăштарса пама ыйтнипе пĕрлех туянакан кирлĕ пек мар пахалăхлă тавара юсанă е улăштарса панă чухне **кирлĕ пек мар пахалăхлă тавара çавăн йышши кирлĕ пек пахалăхлă аналогиллĕ таварпа улăштарса пама ыйтма пултарать.** Раççей Федерацийĕн Правительстви хатĕрленĕ çак требованисем сарăлман таварсен списокне кĕрекеннисем вăл шута кĕмеççĕ.

## ПОТРЕБИТЕЛЬСЕНЕ ХӲТĔЛЕС ЫЙТУСЕМПЕ ЭСИР СПЕЦИАЛИСТСЕН ТӲЛЕВСĔР КОНСУЛЬТАЦИНЕ ИЛМЕ ПУЛТАРАТĂР:

Этил спиртне, алкоголь продукцине туса кăларас, ăна усă курас, пахалăхне тĕрĕслес тата потребительсен прависене хӳтĕлес енĕпе ĕçлекен Тутар Республикинчи патшалăх инспекцийĕ

**www.gosalcogol.tatarstan.ru**
**www.tatzpp.ru**

| Территори органĕ | Телефон |
|---|---|
| Элмет | (8553) 33-67-02 |
| Арск | (84366) 3-28-93 |
| Ешĕлвар | (84371) 4-58-78 |
| Хусан | (843) 277-94-96 |
| Çырчалли | (8552) 71-43-03 |
| Анат Кама | (8555) 36-63-76 |
| Чистай | (84342) 5-49-85 |

**Потребительсен прависене хӳтĕлес тата çыннăн ырăлăхне асăрхаса тăрас Тутар Республикинчи Федераллă службăн управленийĕ**

**(843) 236-94-11**
хĕрӳ лини телефонĕ

**www.vk.com/zpprpnrt**
«Потребительсен прависене хӳтĕлесси. Тутар Республикинчи Роспотребнадзор» «Контактри» онлайн консультаци

**www.16.rospotrebnadzor.ru**

**«Тутар Республикинчи (Тутарстан) Гигиенăпа эпидемиологи центрĕ» ФБСУ консультаци центрĕ**

**(843) 221-90-16** **www.fbuz16.ru**

**Асăрхăр! Потребительсен прависене пăсни çинчен заявлени эсир Тутар Республикинчи Роспотребнадзор управленине пама пултаратăр е потребительсене хӳтĕлессипе çыхăннă ыйтусемпе Тутар Республикинчи нумай функциллĕ центрсем урлă скайппа консультаци илме пултаратăр.**

6+

© ООО «ФОЛИАНТ», 2021 г.
Тираж 1000 экз. Заказ № 31/29
Отпечатано ООО «ФОЛИАНТ». 420111 г. Казань, ул. Профсоюзная, 17в
e-mail: foliantkazan@mail.ru



# ПОТРЕБИТЕЛЬСЕН УСĂ КУРНĂ ТАВАРА ТУЯННĂ ЧУХНЕХИ ПРАВИСЕМ

## ПОТРЕБИТЕЛЬСЕН ПРАВИСЕНЕ ХӲТĔЛЕССИ

**«2014-2025 çулсенче потребительсен прависене хӳтĕлессин комплекслă система аталанăвĕ» Тутар Республикинчи Подпрограммăна пурнăçа кĕртнĕ май Тутар Республикинчи Патшалăхалкоголь инспекцийĕ ыйтнипе пичетленет**

*на чувашском языке*



Хаклă мар тумтир кирек мĕнле секонд-хенда ытти лавккасенчен пахарах тăвать. Ун пек лавккасенче тумтир хакĕ 50 тенкĕрен пуçланма, паллă брендăн чаплă пиншакĕ 500 тенкĕ тăма пултарать. Унсăр пуçне пирĕн час-часах дача, ял е пĕр хут тăхăнмалли тум туянма тивет. Ун пек чухне second-hand лавккисенче, комиссионлă е интернет сайчĕсенче туяннă усă курнă таварсем пулăшу кÿреççĕ.

Усă курнă таварсене туянма хăрамалла мар. Çав вăхăтрах пĕрмай перекетлеме тăрăшни пур чухне те ырă патне илсе çитерменнине асра тытмалла.

Сирĕн чи малтанах çакна шута илмелле: çынсенчен тавар туяннă чух икĕ çын хушшинчи суту-илÿ договорне хатĕрленĕ пулсан çак хутшăнусем потребительсен прависене хÿтĕлесси йышши хутшăну пек квалификациленмеççĕ, çакăн пек праваллă хутшăнусене потребительсен прависене хÿтĕлекен Раççей Федерацийĕн Саккунĕ шута илмест.

1992 çулхи февралĕн 7-мĕшĕнче 2300-1 №-лĕ «Потребительсен прависене хÿтĕлесси» РФ Саккунĕн (малалла – Саккун) Преамбулипе килĕшÿллĕн гражданин çеç потребитель пулма пултарать, сутуçă вара, организаципе право формине пăхмасăрах, – организаци, çавăн пекех суту-илÿ договорĕпе тавар сутакан харпăр хăй предприниматель пулмалла.

Саккунăн 10-мĕш статйипе тата 31.12.2020 çулхи 2463 №-лĕ РФ Правительствин постановленийĕпе килĕшÿллĕн (малалла – Правилăсем) сутуçăн туянакана вăхăтра кăтартса тата ăнланмалла, тавара тĕрĕс суйлама пулăшакан тата ăна хатĕрлекен çинчен чи кирлĕ те тĕрĕс информаци пĕлтермелле.

## ПĔЛТЕРМЕЛЛИ ИНФОРМАЦИ ШУТНЕ ÇАКСЕМ КĔРЕÇÇĔ:

- тавар ячĕ;
- ăçта вырнаçни (адресĕ), изготовителĕн (сутуçăн) фирмăллă ячĕ, туянакансенчен претензи йышăнакан, тавара техника тĕлĕшĕнчен пăхса тăракан тата юсав ĕçĕсем тăвакан полномочиллĕ организацисем (организаци) ăçта вырнаçни (адресĕ), ют çĕршывра кăларнă таварăн – туса кăларакан çĕршыв ячĕ;
- техника тĕлĕшĕнчен йĕркелесе тăрассине Раççей Федерацийĕн законодательствипе палăртнă йĕркепе тавар килĕшсе тăнине çирĕплетекен сведенисем;
- таварăн тĕп потребитель пахалăхĕ çинчен калакан сведенисем;
- таварсен энергетика пахалăхĕ çинчен калакан сведенисем, çакăн пек информаци таварсенче пулмаллине энергетика пахалăхне ÿстересси çинчен Раççей Федерацийĕн законодательствипе килĕшÿллĕн палăртнă;
- тавара эффективлă тата сиенсĕр усă курассин правилисемпе йĕркисем;
- пĕр-пĕр тавар валли палăртнă пулсан – гаранти срокĕ;
- тавар мĕнлерех пулнине, унăн çитменлĕхĕсене кăтартакан сведенисем;
- таварпа санитарипе эпидемие хирĕçле ĕçсем irttерни çинчен сведенисем, техника тĕлĕшĕнчен кăткăс таварсем валли – техника характеристикисем;
- тавара мĕнле усă курмалли тата усă курма май пур е урăх тĕллевпе усă курасси çинчен сведенисем;
- тавара усă курнине кăтартса паракан, çав шутра – унăн кăлтăкĕсене палăртакан сведенисем, вĕсене тавар ярлыкĕ çинче çыраççĕ.

Енчен те сутлăхра усă курнă тавар пур пулсан, ун çинчен вăл палăртнă требованисемпе килĕшсе тăни, усă курмалли срокĕ е юрăхлă тапхăрĕ çинчен информаци пулмалла. Анчах та çакăн пек информаци çук пулсан тавара сутакан сутуçăн **туянакана** тавар палăртнă требованисемпе килĕшсе тăмалла тесе **пĕлтермелле**, ун çинче юрăхлă срокĕ е усă курмалли срокĕ пулмалла, анчах та çак сведенисем çук тесе пĕлтермелле.

- пĕр-пĕр тавар валли палăртнă пулсан – усă курмалли срокĕ (юрăхлă тапхăрĕ), çавăн пекех – енчен те палăртнă срокĕ тухсан – тавар çын пурнăçăшĕн, сывлăхĕшĕн, пурлăхĕшĕн хăрушă пулсан е ăна палăртнă пек усă курма май çук пулсан палăртнă срокĕ тухсан туянаканăн малалла мĕн тумаллине тата палăртнине пурнăçламасан мĕн пулма пултарассине кăтартса памалла;
- тенкĕпе палăртнă хакĕ тата тавара туянмалли условисем.

Таварăн çитменлĕхĕсем çинчен сутуçăн сăмахпа çеç мар, çырса та (тавар ярлыкĕ çинче, тавар чекĕнче е урăх мелпе) пĕлтермелле.

Правилăсен 30-мĕш тата 31-мĕш пункчĕсемпе килĕшÿллĕн усă курнă медицина изделийĕсене, эмел препарачĕсене, харпăр хăй çыннăн гигиена япалисене, парфюмерипе косметика таварĕсене, çĕвĕ машинипе çĕленĕ кĕпе-йĕм (вырăн тавраш) тата трикотаж изделийĕсене, нуски-чăлха изделийĕсене тата пĕр хут усă курмалли савăт-сапана сутма юрамасть.

Кулленхи пурнăçра усă курмалли техника тĕлĕшĕнчен кăткăс усă курнă таварсене сутнă чухне таварпа пĕрлех потребителе (сутуçăн пур пулсан) таварăн техника тата (е) усă курмалли (эксплуатаци) докуменчĕсене (техника паспортне, е ăна улăштакаракан урăх документа, усă курмалли инструкцисене), çавăн пекех тăрса юлнă гаранти срокĕнче потребителĕн усă курма ирĕк пуррине çирĕплетекен таварăн гаранти талонне памалла

Туянакана пахалăхлă мар тавар сутса янă пулсан, унăн кăлтăкĕсене сутуçă пĕлтермен пулсан Саккунăн 18-мĕш статйипе килĕшÿллĕн туянакан **ХĂЙ СУЙЛАСА СУТУÇĂРАН ÇАКНА ЫЙТМА ПУЛТАРАТЬ**:

- аналогиллĕ маркăллă (модельлĕ, артикуллă) таварпа улăштарса пама;
- çавăн пекех, анчах урăх маркăллă (модельлĕ, артикуллă) таварне хакне çĕнĕрен шутласа улăштарса пама;